Районти вĕрентӳ ĕçченĕсен августри конференцийĕнчен

# Вĕрентекен пурнăçпа тан пыма тивĕç

Иртнĕ эрне кун, августăн 25-мĕшĕнче, Муркаш шкулĕнче районти вĕрентӳ ĕçченĕсен августри конференцийĕ иртни пирки хаçатра пĕлтернĕччĕ. Конференци ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, ЧР ял хуçалăх министрĕ М.В. Игнатьев, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ В.Г. Данилов та хутшăнчĕç.

Çавна палăртмалла. Йăлана кĕнĕ тата çуллен иртterekен çак конференци кăçал «Вĕрентӳ» приоритетлă наци проекчĕн регионаллă тата муниципаллă вĕрентӳ ĕçне модернизацилессин системинчи вырăнĕ» темăпа иртрĕ.

Малтанах Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулăн презентацийĕ пулчĕ. Конференцие хутшăнакансем шкул ĕçĕ-хĕлĕпе туллин паллашма пултарчĕç.

Хыççăн конференцие хутшăнакансем секцисене пайланчĕç. Секцисенче ĕç малалла тăсăлчĕ. Пĕтĕмпе 4 секци ĕçлерĕ. Кусем вĕсем пĕрремĕшĕ – «Информацисем, инновацисем, инвестицисем», иккĕмĕшĕ – «Модернизаци тапхăрĕнче муниципаллă вĕрентӳ системин çыхăнăвĕ», виççĕмĕшĕ – «Вĕренекенсем харпăр хăй тĕлĕшпе çирĕпленсе çитесси класс ертӳçин ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнни», тăваттăмĕшĕ – «Патшалăх обществăлла управленийĕсем вĕрентӳ учрежденийĕсене аталантарассипе ĕçлесе пыни».

Конференцин пленарлă пайне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов доклад туса пачĕ. Вăл çакна палăртрĕ. Вĕрентӳ сферинчи наци проектне ăнăçлă пурнăçа кĕртме республикăра та, районта та унччен хи çулсенчех йĕркелӳпе право условийĕсене, шкулсенче хальхи вĕрентӳпе пурлăх базине туса хунă, вĕрентӳ учрежденийĕсен инноваци ĕçĕ-хĕлĕн опытне пухнă. Вĕсем пĕтĕмĕшле пĕлӳ парассин системине реструктуризаци тăвассипе çыхăннă. Юлашки 6 çул хушшинче районти 6 шкула реструктуризациленĕ. 10 база шкулне, çав шутра 3 ресурс центрне хальхи оборудованипе, пысăк квалификациллĕ кадрсемпе тивĕçтернĕ. 800 ытла ачана ку шкулсене ятарлă шкул автобусĕсемпе илсе çӳреççĕ. Вĕрентӳ учрежденийĕсен çĕнĕ моделĕсене туса хунă. Вĕрентӳпе культура центрĕсемпе комплексĕсем ялта пурăнакансен ăс-хакăл культурин центрĕсем пулса тăраççĕ.

Пĕрлехи патшалăх экзаменĕ вĕрентӳ пахалăхĕн шайне кăтартма май паракан тĕп мелсенчен пĕри пулса тăрать. Районти вĕрентӳ системи ку сăнава 6 çул ĕнтĕ хутшăнать. Ку экзамена тытакансен йышĕ çуллен ӳссе пырать. Кăçал та 11-мĕш класран вĕренсе тухакансем математикăпа пурте, ытти предметсемпе хăйсене килĕшнĕ тăрăх пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытнă. Муркаш лицейĕнче, Нискасси тата Муркаш шкулĕсенче кăтартусем япăх мар.

2006 çулта районти шкулсенчен вĕренсе тухнисенчен 40 процентĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсем пулса тăнă. Вăл шутран 7 процентĕ çĕршыври чи пысăк вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕнĕ.

2005-2006 вĕренӳ çулĕнче 1000 ытла вĕренекен предмет олимпиадисене хутшăннă. 4 вĕренекен пĕтĕмпе 6 хут республика олимпиадисен çĕнтерӳçисемпе призерĕсем пулса тăнă. Кусем вĕсем Игорь Данилов (Нискасси), Мария Лисова (Йӳçкасси), Ольга Ефимова (Турай), Любовь Вишнева (Шатракасси).

Вĕрентӳ сферинчи наци проекчĕсем инноваци вĕренӳ программисене пурнăçа кĕртекен шкулсене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерессипе, чи лайăх учительсене хавхалантарассипе çыхăннă. 2006 çул валли чи пултаруллисене хавхалантарма педагогсем валли район админитсрацийĕн пуçлăхĕн 20 грантне 5-шер пин тенкĕ тата 5 грант 20-шер пин тенкĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем валли çирĕплетнĕ.

Чи лайăх вĕрентӳ учрежденийĕсемпе учительсене палăртма 2005 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче районта шкулсен обществăлла экспертизин кунне ирттернĕ. Унта 10 шкул хутшăннă. Кусем Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Калайкасси, Йӳçкасси, Нискасси, Оринин, Çатракасси, Шетмĕпуç, Сосновка шкулĕсем тата Муркаш лицейĕ. Инноваци вĕренӳ программисене пурнăçа кĕртекенсем хушшинчи конкурсăн пĕрремĕш тапхăрĕнче мала тухнă май гранта Муркаш лицейĕ, Калайкасси, Нискасси, Çатракасси, Сосновка шкулĕсем тивĕçнĕ. Республикăри конкурс комиссийĕн йышăнăвĕпе вара Муркаш лицейне Раççей Президенчĕн премине 1 миллион тенкĕ, Калайкасси шкулне Чăваш Республикин Президенчĕн грантне 200 пин тенкĕ пама йышăннă. Ку укçа-тенкĕпе шкулсем пурлăхпа техника, вĕрентӳ базине çĕнетсе пуянлатма, вĕрентекенсен квалификацине ӳстерме усă курĕç.

Çынсен инноваци культурине çирĕплетес тĕлĕшпе вĕрентӳ инфраструктурине туса хурасси кадрсен политики енĕпе çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Вĕрентӳ ĕçĕнче хальхи вăхăтра районта 630 учитель вăй хурать. Вăл шутран 96 процентĕ аслă пĕлӳ илнĕ. 89 процентĕн квалификаци категорийĕ пур. Вăл шутран чи аслă категориллисем 6 процент, пĕрремĕш категориллисем 45 процент, иккĕмĕш категориллисем 38 процент. 5 çул таран ĕçлекен учительсем 9 процент, 20 çул ытла ĕçлекенсем – 45 процент.

Çуллен педагогсен 20 процентĕ квалификацие ӳстерет.

Чи пултаруллă учительсене палăртма район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ тата Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви тĕрлĕрен конкурссем йĕркелеççĕ. Акă, инноваци вĕрентӳ программисемпе проекчĕсен республикăри виртуаллă фестивалĕнче Муркаш шкулĕнче кĕçĕн классене вĕрентекен В.В. Смирнова виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Республикăри «Информаципе коммуникаци технологийĕсемпе усă курса ирттернĕ чи лайăх урок» конкурсра Турай шкулĕн технологи учителĕ А.Ю. Герасимова виççĕмĕш пулнă, «Педагогика инновацийĕсем» дистанци конкурсĕнче Йӳçкасси шкулĕн ют чĕлхесен учителĕ Н.В. Семенова тата Муркаш лицейĕн информатика учителĕ А.В. Лескина призерсен шутне лекнĕ.

«Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн кăçалхи февральте чи лайăх учительсен конкурсĕ пуçланчĕ. Унта пĕтĕм учительсен 5 процентĕ хутшăннă. 10 учителĕн ĕçĕсене республикăри конкурса тăратнă. Республика конкурс комиссийĕн йышăнăвĕпе Раççей Федерацийĕн Президенчĕн премине – 100 пин тенкĕне Турай шкулĕн технологи учителĕ А.Ю. Герасимова, Москакасси шкулĕн кĕçĕн классен учителĕ С.Ф. Желтова, Калайкасси шкулĕн физкультура учителĕ В.Т. Моисеев, Чăваш Республикин Президенчĕн грантне – 10 пин тенкĕне Муркаш шкулĕн кĕçĕн классен учителĕ В.В. Смирнова тивĕç пулнă.

Вĕрентĕвĕн аталанса пыракан Интернет-ресурсĕсемпе усă курассипе, вĕрентӳ процесĕн пур участникĕсемпе оперативлă сеть çыхăнăвĕ йĕркелессипе палăрăмлă утăмсем тунă. Хальхи вăхăтра шкулсенче вăтамран кашни 19 вĕренекен пуçне 1 компьютер тивет, шкулсенчен 54 процентĕ Интернета тухать тата электронлă почтăпа усă курать. Мăн Сĕнтĕр шкулĕн бази çинче преподавательсен дистанциллĕ вĕренĕвĕн районти центрне туса хунă.

Проектăн тĕп енĕсенчен пĕри вăл – шкул ачисем хушшинче туса ирттерекен воспитани ĕçĕн пахалăхĕпе пĕлтерĕшне ӳстересси. Кунта класс ертӳçисен ĕçĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса класс ертӳçисене уйăхсерен хушса тӳлеме тытăннă. Класс ертӳçисем халĕ шкулсенче 337. Вĕсем хушшинче чи пултаруллисене тупса палăртса хавхалантарас тĕллевпе 2005 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2006 çулхи мартăн 15-мĕшĕччен районта «Чи лайăх класс ертӳçи – 2006» конкурс ирттернĕ. Конкурсра Муркаш шкулĕнчи Н.В. Толстова мала тухнă. Мăн Сĕнтĕрти И.К. Матвеевапа Орининти Т.Н. Михайлова иккĕмĕш, Калайкассинчи Т.А. Ершовапа Тойкилтĕри О.С. Петрова виççĕмĕш пулнă. Чăваш Республикинчи вĕрентӳ фончĕн йышăнăвĕпе Н.В. Толстова Мускав хулинче вĕренӳ семинарне хутшăннă.



Наци проекчĕн тепĕр енĕ вăл – пуçаруллă, лайăх ĕлкĕрсе пыракан çамрăксене, олимпиадăсемпе наукăпа практика конференцийĕсен çĕнтерӳçисене патшалăх енчен пулăшасси. Районта çуллен вĕренӳ чĕрĕкĕн итогĕсемпе чи пултаруллă 100 вĕренекен район администрацийĕн пуçлăхĕн ятарлă стипендине тивĕçет. Кунсăр пуçне республикăра 1000 ытла ЧР Президенчĕн стипендине йĕркеленĕ, президент премийĕсен системи пур. Районти 17 çамрăк çын 1000 тенкĕ президент стипендине илсе тăрать.

Наци проекчĕсенче ятарлă механизм пур. Вăл вĕрентӳ системине общество валли те, ĕç рынокĕ валли те «уçать». Кунпа пĕрлех обществăна вĕрентӳ ĕçне ертсе пыма хутшăнма майсем туса парать, вĕрентӳ ĕçне пахалăх енĕпе çĕнĕ шая çĕклеме пулăшать.

Малтанах «Лицей условийĕнче вĕрентӳ процесне индивидуализацилесси» темăпа Муркаш лицейĕн директорĕ **Н.Е. Смирнов** тухса калаçрĕ.

– Юлашки вăхăтра лицей ĕçĕ-хĕлĕн условийĕсенче нумай улшăнусем пулса иртрĕç. Вĕсем пире вĕрентӳ процесне малалла аталантарса пыма хистеççĕ,– терĕ вăл. Çавăнпах ĕнтĕ лицейра ку улшăнусене шута илмесĕр тăма пултараймаççĕ. Рынăк хутшăнăвĕсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Çавна май вĕренсе тухакансем пурнăçра хăйсен вырăнне тупма хатĕр пулмалла. Обществăна хальхи вăхăтшăн юравлă пĕлӳ илнĕ, хăйсем тĕллĕн йышăну тума пултаракан çынсем кирлĕ.

Пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн процесне индивидуализацилес задача тăрать. Çапла тума Муркаш лицейĕнче объективлă сăлтавсем пур.

Калайкасси шкулĕн директорĕ **И.В. Осипова** шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн опычĕпе паллаштарчĕ. Шкулта 37 педагог ĕçлет. Çĕнĕрен 3 çамрăк специалист ĕçлеме килнĕ. Вĕренекенсен йышĕ 340 ачана яхăн.

Хальхи вăхăтра пурнăçпа тан пыма пултарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тепĕр чухне вара пурнăçран маларах утма та пултармалла. Çапла тума тăрăшать те шкул коллективĕ.

Хальхи вăхăтра республикăра 100 ытла инвестици программине пурнăçа кĕртеççĕ. Калайкассисем вара вĕсенчен 10-шне хутшăнаççĕ. Чи пĕлтерĕшли вĕсенчен – «Вĕрентӳ системин реформи». Унта хутшăнса шкула хальхи вĕрентӳпе пурлăх базипе тивĕçтерме пултарнă. Шкулта вăхăт ыйтнине тивĕçтерекен компьютер класĕ пур, тĕслĕх библиотека ĕçлет. Вĕренекенсене пахалăхлă пĕлӳ пама майсем çителĕклĕ.

– Енчен çĕршыв шайĕнче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пĕлтерĕшне тĕрĕс хакласа ку ыйту çине пысăк тимлĕх уйăрма тытăнчĕç пулсан, пирĕн те хамăрăн тивĕçе вăхăт ыйтнине кура пурнăçлас пулать,– терĕ хăйĕн сăмахĕнче Калайкасси шкулĕн физкультура учителĕ **В.Т. Моисеев.**– Пахалăхлă пĕлӳ парас тесен учителĕн хăйĕн те пĕлӳ шайне ӳстерсех пымалла, пурнăçран юлмалла мар.

Малалла В.Т. Моисеев шкулта профиль класне йĕркелени пирки каласа пачĕ. Ку вăл физкультура енĕпе. Вĕренӳ çулĕ пуçланнă чухнех ку класа ачасене тестсем ирттерсе йышăннă. Çулталăк иртсенех пĕрремĕш çитĕнӳсем пурри курăнать. Икĕ вĕренекен спортăн тĕрлĕ енĕсемпе Раççей пĕрлештернĕ командин членĕсем пулса тăраççĕ.

Турай шкулĕн технологи учителĕ **А.Ю Герасимова** вĕренĕвĕн проектлă мелĕ, унăн пĕлтерĕшĕпе вырăнĕ, Юнкă шкулĕн директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ **И.Г. Илларионова** вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче класс ертӳçи епле вырăн йышăнни пирки сăмах хускатрĕç, районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксем енĕпе ĕçлекен уйрăмĕн пуçлăхĕ **Г.И. Григорьева** çул çитмен çамрăксем хушшинче право йĕркине пăсакансем сахал маррине, ку енĕпе лару-тăрăва лайăх еннелле улăштарма пĕрле çыхăнса ĕçлемеллине палăртрĕ.

Çавăн пекех конференцире депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ **В.Г. Данилов,** ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, ял хуçалăх министрĕ **М.В. Игнатьев** тухса калаçрĕç, вĕрентӳ ĕçĕн пĕлтерĕшĕ юлашки вăхăтра палăрмаллах çӳллĕ шая çĕкленнине палăртрĕç.

Конференци итогĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕ **Ю.А. Иванов** пĕтĕмлетрĕ.

Çав кун Муркаш шкулĕ чечексем айне путрĕ тейĕн. Кашни шкултанах конференцие чечек кăшăлĕсем илсе пынă. Тĕрлĕ номинаципе вĕсен конкурсне ирттерчĕç.

Шкулта вăй хуракан пултаруллă та хастар ĕçченсен пысăк ушкăнĕ ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин, район администрацийĕн, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн Хисеп грамотисене, парнесене илме тивĕç пулчĕ.

Конференцие хутшăннисене Нискасси шкулĕнчи пултарулăх ушкăнĕ савăнтарчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкечĕкре: Нискасси шкулĕ иртнĕ вĕренӳ çулĕн итогĕсемпе районта мала тухнă май шкул директорне А.А. Калинкинана район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Хисеп грамоти парать.**

## Хастар ĕçпе тивĕçнĕ

**Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствин Хисеп грамотисене тивĕçнисем:**

– **Александр Витальевич АНИКИН,** Йӳçкасси шкулĕн музыка учителĕ;

– **Татьяна Сергеевна ГОРШКОВА,** Оринин шкулĕн пуçламăш классен учителĕ;

– **Алиса Николаевна ИВАНОВА,** Атапай шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ;

– **Изольда Куприяновна МАТВЕЕВА,** Мăн Сĕнтĕр шкулĕн биологи учителĕ;

– **Ольга Германовна ПЕТРОВА,** «Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ;

– **Алиса Ивановна ПОРФИРЬЕВА,** Шатракасси шкулĕн пуçламăш классен учителĕ;

– **Лидия Михайловна ЧЕРНОВА,** Нискасси шкулĕн акăлчан чĕлхин учителĕ;

– **Ирина Александровна ЕРШОВА,** район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ.

**Район администрацийĕн Хисеп грамотине тивĕçнисем:**

– **Николай Тимофеевич АНТОНОВ,** Муркаш шкулĕн технологи учителĕ;

– **Зинаида Петровна ГРИГОРЬЕВА,** Турай шкулĕн директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ;

– **Ольга Вячеславовна ГРИГОРЬЕВА,** Йӳçкасси шкулĕн хореографĕ;

– **Алина Николаевна ДАНИЛОВА,** Калайкасси шкулĕн библиотекарĕ;

– **Надежда Алексеевна ДИМИТРИЕВА,** Чуманкасси шкулĕн чăваш чĕлхипе литературин учителĕ;

– **Раиса Андреевна МОИСЕЕВА,** Чуманкасси шкулĕн акăлчан чĕлхин учителĕ;

– **Евгений Александрович СОРОКИН,** Сыпай шкулĕн музыка учителĕ;

– **Роза Николаевна ФИЛИППОВА,** Муркаш шкулĕн технологи учителĕ.

**Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн Хисеп грамотине тивĕçнисем:**

– **Клавдия Аркадьевна АЛЕКСЕЕВА,** Йӳçкасси шкулĕн пуçламăш классен учителĕ;

– **Елена Вениаминовна МАКСИМОВА,** Сосновка шкулĕн кĕске вăхăтлăх ушкăн воспитателĕ;

– **Эмма Михайловна ФЕДОРОВА,** Муркаш шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕ.